24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
НОЯБРЬ
11
ЫТЛАРИКУН
266 (5981) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАСОР ĔРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## Пирĕн çарпа флота пĕтĕм çĕршыв енчен активлăн пулăшса пыни кирлĕ

Пирĕн çĕршыв ĕмĕр мани кунсенче пурăнать. Совет çĕршывĕпе унăн çарĕсем тĕнчери чи реакциллĕ вăйсене хирĕç, вăрă-хурахла чи тискер империалистсене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пыраççĕ. Эпир халĕ пурăнса иртерекен кунсем, этемлĕх историйĕн чи çутă страницисене пуçласа яракан кунсем пулса, ылттăн саспаллисемпе сырăнса юлăç. Ĕмĕрсем, çĕршер ĕмĕрсем иртĕç, анчах совет çĕршывĕнчи халăхсен паттăр кĕрешĕвĕ çинчен нихăçан та манмĕç, пирĕн халăхăн мухтавĕпе чысĕ ĕмĕр-ĕмĕрех çутă хĕвел пек ялкăшса тăрĕç.

Анчах шăпах çавăн пирки ĕнтĕ пирĕн халăхăн нумай йывăрлăхсем тӳссе иртнине лекет, хăйĕн умне тухса тăнă пысăк хăрушлăха пĕтерсе лартассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме тивет. Пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх вăрçăн тăватă уйăхĕ хушшинче вăйсăрланмарĕ кăна мар, пачах урăхла, вăл татах та ытларах вăйланчĕ. Сталин юлташ, пĕтĕм çĕршыва çакăн çинчен асăрхаттарса, хăйĕн историллĕ докладĕнче çапла каларĕ:

«Украинăн пысăк пайне, Белоруссине, Молдавине, Литвана, Латвине, Эстонине тата ытти чылай облассене тăшман тытса илчĕ; Донбаса пырса кĕчĕ, Ленинград патне хура пĕлĕт пек пырса капланчĕ, пирĕн мухтавлă столицăна—Мускава хăратса тăрать. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пирĕн çĕршыва сараташçĕ, рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин вăйĕпе тунă хуласемпе ялсене арканаççĕ».

Тăшман вăйлă та ултавлă, вăл пирĕн çĕршыври халăхсене нимĕç империалисчĕсен чури туса хурасшăн талпăнать. Эпир çакна лайăх пĕлсе тăратпăр, анчах эпир хăраса ӳкместпĕр, мĕншĕн тесен эпир çакна та лайăх пĕлсе тăратпăр: аслă вырăс халăхĕ çĕнтереймен тăшман историре пулман тата пулас та çук. «Плехановпа Ленинăн, Белинскипе Чернышевскийĕн, Пушкинпа Толстойăн, Глинкăпа Чайковскийĕн, Горькипе Чеховăн, Сеченовпа Павловăн, Репинпа Суриковăн, Суворовпа Кутузовăн нацийĕ» хăйĕн тăшманĕсене яланах çĕнтернĕ тата малашне те çĕнтерĕ.

Хĕрлĕ Çар парадĕнче тухса каласа, Сталин юлташ пире çакна аса илтерчĕ: «Пирĕн çĕршыв хальхинчен йывăртарах положенире пурăннă кунсем те пулнă. Аса илĕр-ха 1918 çула, ун чухне эпир Октябрьти революци пулнăранпа пĕр çул тултарнине уявланă. Пирĕн çĕршывăн виçĕ чĕрĕкĕ ун чухне ютçĕршыв интервенчĕсен аллинче пулнă... Пирĕн союзниксем пулман, пирĕн Хĕрлĕ Çар пулман,—эпир ăна туса йĕркеленĕ кăна тытăннă,—пирĕн тырпул çитмен, хĕçпăвал çитмен, тумтирсем çитмен. Ун чухне пирĕн çĕршыв çине 14 государство тапăнса килнĕ. Анчах эпир пуçа усса хуйхăрман, хăраса ӳкмен. Вăрçă вучĕ айĕнче ун чухне эпир Хĕрлĕ Çара организациленĕ, хамăран çĕршыва çар лагерĕ туса хунă. Аслă Ленинăн хăвачĕ ун чухне пире интервентсене хирĕç вăрçма хавалантарса пынă».

Çак вăрçăра пирĕн халăх Сталин, Фрунзе, Ворошилов, Буденный юлташсем пек чаплă полководецсем ертсе пынипе кĕрешнĕ. Вĕсем ертсе пынипе кĕрешсе, вăл хăйăн речĕсенчен Чапаев, Щорс, Лазо тата ытти геройсем пек мухтавлă геройсене çуратса ӳстернĕ. Темĕнле йывăрлăхсем пулнă пулин те, тăшмана çĕнтернĕ, ăна хамăран таса çĕр çинчен хăваласа янă.

«Халĕ пирĕн çĕршывăн положенийĕ 23 çул ĕлĕкрех пулнинчен чылай лайăхрах. Пирĕн çĕршыв халĕ промышленность енĕпе те, продовольстви енĕпе те, чĕртавар енĕпе те 23 çул ĕлĕкрех пулнинчен нумай хут пуянрах. Пирĕн халĕ союзниксем пур, пирĕнпе пĕрле вĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç пĕрлĕхлĕ фронт тытса пыраççĕ. Пире халĕ гитлерла тиранин пусмăрĕ айне кĕрсе ӳкнĕ Европăри пур халăхсем те кăмăлласа пулăшса пыраççĕ. Пирĕн халĕ питех те паха çарпа питех те паха флот пур, вĕсем пирĕн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хăйсен кăкăрĕпе тăрса хӳтĕлеççĕ. Пирĕн продовольстви енĕпе те, хĕçпăвалсем енĕпе те, тумтирсем енĕпе те пысăк çитменлĕхсем çук. Пирĕн пĕтĕм çĕршыв, пирĕн çĕршывăри халăхсем пурте хамăран çарсене, хамăран флота тĕрек парса тăраççĕ, нимĕç фашистсен захватчикла кĕтĕвĕсене çĕмĕрсе тăкма çарпа флота пулăшаççĕ. Сынсем тĕлĕшпе пирĕн резервсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай. Аслă Ленинăн хăвачĕ тата унăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ пире халĕ, 23 çул ĕлĕкрех хавхалантарнă пекех, отечественнăй вăрçă туса пыма хавхалантараççĕ.

Эпир нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме пултаратпăр тата çĕнтермелле те...» (Сталин).

Анчах та, çĕнтерӳ тăвас тесен, пирĕн нумай вăй хурса, хамăран пурнăçа шеллемесĕр кĕрешсе пырас пулать. Мĕнпур предприятисемпе учрежденисен, совхозсемпе колхозсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ытлă пек урăхлатса çĕнетес пулать. Халĕ кашни предприяти, кашни колхоз, пирĕн пĕтĕм çĕршыв вăрçă интересĕсем валли ĕçлемелле. Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче çĕршыв умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çулпуç çапла каларĕ: «...пирĕн çарпа пирĕн флота хамăран пĕтĕм çĕршыв енчен ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыни кирлĕ; пирĕн рабочисемпе служащисем, арçынсемпе хĕрарăмсем, предприятисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронта валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пуленлетсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыва валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн пĕтĕм çĕршыв тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем организациленсе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ, пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăр тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕхлĕхĕшĕн, нимĕç çарĕсене çапса çĕмĕрессишĕн ирĕклĕлле аслă вăрçă туса пыракан лагерь пулса тăни кирлĕ».

Юратнă учитель çапла чĕнсе каланине пирĕн республикăри ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăх пекех, пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Канашри вагонсем юсакан заводри фрезеровщик медаленосец Осипов юлташ ноябрĕн 8-мĕшĕнче сменăри нормăна 375 процент тултарнă. Çав кунах нумай станокпа ĕçлекен Игнатьев юлташ, шлифовщик Гатин, тимĕрçĕ Соломка тата ытти юлташсем плана 2—3 хут ытла иртерсе тултарнă. «Нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкма мĕн чухлĕ кирлĕ пулать, эпир фронта çăвăн чухлĕ продукци паратпăр», теççĕ рабочисем.

Колхозниксем те рабочисенчен юлмаççĕ. Сталин юлташăн докладĕ колхозниксене ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Сарапакассинчи (Шупашкар р.) артель членĕсем докладра итленĕ хыççăн социализмлă ăмăртăва тухнă та IV-мĕш квартал планне 200 процент тултарма йышăннă. Лапсарти колхозник Роман Егоров боецсем валли малтан пани çумне хушса татах 2 тир, çур килограмм çăм панă. Янăмри (Сĕнтĕр р.) «Дружба» артель членĕсем Сталин докладне итленĕ хыççăн вăрман хатĕрлеме 70 лаша янă. Кăпаскри финагент Орлов юлташ тăваттăмĕш кварталти финплана срокчен тултарма пулнă. Чылай çĕрте колхозсемпе колхозниксем çулпуç докладне итленĕ хыççăнах хăйсен государство умĕнчи обязательствисене парса татнă, государствăна ытлашши тырпула, аш-хăмай, сĕт-çу сутассине организациленĕ.

Сталин юлташ докладне сӳтсе-явас, вăл хăларса тăратнă задачăна пурнăçа кĕртес ĕçе малашне татах та вăйлатса пырас пулать. Мĕншĕн тесен «çав задачăна пурнăçа кĕртсен кăна тата нимĕç захватчикĕсене çапса çĕмĕрсен кăна, эпир нумайлăха пыракан тата тĕрĕслĕхлĕ мир туянма пултаратпăр».

## Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă ятпа Совет Союзне килнĕ саламсем

Америка писателĕ Хэмингуэй çапла çырать: «Совет Союзĕ Гитлера тата варварствăна хирĕç кĕрешни мана мĕн тери тĕлĕнтерсе мăнаçлăх хисеплеттерни çинчен çырса пĕлтерме сăмах та тупăнмасть. Эсир, тахçан авал Испани пĕтĕм тĕнче халăхĕшĕн кĕрешнĕ пек, пирĕншĕн пурсăмăршăн та кĕрешетĕр. Хальхи вăхăтра демократиллĕ çĕршывсен Совет Союзăнчи рабочисемпе салтаксене пĕтĕм вăйран пулăшмалла: вĕсем фашизма хирĕç чĕререн кĕрешекен кашни халăхăн геройĕсем пулса тăраççĕ. Гитлера Совет Союзĕн паттăр çарăсĕ парăнтарма нихăçан та май килеймĕ. Чăннипех çапăçакан пĕр пысăк çĕршыва та нихăçан никам парăнтарайман».

Француз писателĕ Жюль Ромэн çапла çырать: «Вырăс çарĕ тăшмана хирĕç тĕлĕнмелле паттăрăн çапăçни, Сталинăн çавтери чаплă выступленийĕ пекех, халăхи çапăçу çĕнтерӳпе вĕçленнессине шантарать, Российăна пулăшу парассине хирĕслекен шухăшсене пурне те сирсе ярать. Российăна пулăшу парасси мĕнпур демократиллĕ правительствăсемшĕн. чăн-чăн тивĕçлĕ ĕç, урăх ăс-пуç хушшинче тумалли акт пулса тăмалла».

## Хĕрлĕ Çаран высший начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

### ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

### ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Хĕрлĕ Çаран высший начальство составĕнчи çак çынсене СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнче халарнă Указпа çирĕплетнĕ çар званийĕсем парас:

**ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**Бодин** Павел Иванович
**Малиновский** Родион Яковлевич
**Подлас** Кузьма Петрович
**Советников** Иван Герасимович.

**АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**Белов** Павел Миронович
**Говоров** Леонид Николаевич
**Дереш** Николай Андреевич
**Корнилов-Другов** Василий Георгиевич
**Тихонов** Виктор Георгиевич.

**ТАНКОВАЙ ВОЙСКАСЕН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЗВАНИНЕ ÇАКНА ПАРАС:**

**Тамручи** Владимир Степанович.

**ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**Батюня** Александр Васильевич
**Борисов** Аркадий Борисович
**Борисов** Федор Захарович
**Буховец** Георгий Климентьевич
**Васильев** Илья Васильевич
**Вещезерский** Георгий Александрович
**Гэген** Николай Александрович
**Гричко** Андрей Антонович
**Евстигнеев** Петр Петрович
**Жмаченко** Филипп Федосеевич
**Захватаев** Никанор Димитриевич
**Ильин** Лев Димитриевич
**Корженевич** Феодосий Константинович
**Коршунов** Андрей Антонович
**Красильников** Даниил Ефимович
**Марцинкевич** Владимир Николаевич
**Скворский** Лев Соломонович
**Чернышев** Федор Васильевич
**Юшкевич** Михаил Куприянович.

**АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**Безруи** Семен Федорович
**Варенцов** Сергей Сергеевич
**Воскресенский** Александр Иванович
**Жук** Иван Яковлевич
**Курбатов** Александр Иванович
**Петров** Михаил Осипович
**Полянский** Николай Иванович
**Семенов** Николай Николаевич
**Стрельбицкий** Иван Семенович.

**АВИАЦИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**Богородецкий** Александр Константинович
**Зайцев** Александр Сергеевич
**Златоцветов** Абрам Ефимович
**Сковнин** Алексей Антонович
**Скрипко** Николай Семенович
**Туркель** Иван Лукич
**Ярцев** Виктор Иванович.

**ТАНКОВАЙ ВОЙСКАСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:**

**Кузьмин** Григорий Иванович
**Михайлов** Николай Филиппович
**Тимофеев** Сергей Михайлович.

**СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.**

**СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.**

Мускав, Кремль.
1941 çулти ноябрĕн 9-мĕш.

## *Совет Информаци Бюровĕнчен*

### Ноябрĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçусем туса пынă. Фронтăн Крымри участокĕнче уйрăмах хаяр çапăçусем пулнă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, ноябрĕн 8-мĕшĕнче немĕçсенне 10 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче Мускав патĕнче немĕçсен 6 самолетне персе антарнă.

* * *

Хĕвеланăç тата Кăнтăр фрончĕсенче çапăçакан пирĕн авиачăсем ноябрĕн 8-мĕшĕнче тăшманăн 30 танкне, вăтăра çити полевой орудине, пехотăпа вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ 350 автомашинине, 30 ытла мотоцикline, штабсен темиçе автобусне, горючи тултарнă 30 цистернине, 50 лавне пĕтерсе тăкса стройран кăларнă. Противникăн пехотине ихĕ батальона яхăн сапаласа ярса пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче çапăçакан Кузнецов юлташăн танковай чăçĕ ноябрĕн 6-мĕшпе 7-мĕш кунĕсенчи çапăçусенче тăшманăн 60 танкне тата противникăн мотопехотине ихĕ батальон ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче çапăçакан Ухов юлташăн авиачăсĕ ноябрĕн 1—8-мĕшĕсем хушшинче противникăн 232 автомашинине, 9 бронемашинине, горючи тултарнă 25 автоцистернине, боеприпассем тиенĕ 25 вагонне, чугунçул тăрăх турттарма горючи тултарнă 6 цистернине, 7 зенитнăй батарейине, пилĕк танкине, прожекторсен 4 установкине, 80 мотоцикline тата противникăн чĕрĕ вăйне 950 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарни çинчен тунă доклад тата вăл Хĕрлĕ Çаран ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ Площадьре пуллă парадĕнче туха каланă сăмах немĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Флочĕн боецĕсемпе командирĕсене çĕнĕрен геройла ĕçсем тума хавхалантарчĕç.

— Сталин юлташăн докладĕ совет воинĕсен тата пирĕн пĕтĕм халăхăн çапăçури хăватне çĕклентерет,—тесе калать кĕçĕн лейтенант Лихоев.—Гитлеровецсен империалистла йыткĕтĕвĕсене эпир çĕмĕрсе тăкас ĕçе хамăр шанса тăнине Сталин юлташăн докладĕ татах та ытларах çирĕплетет.

Пирĕн тăван çĕр çине ура ярса пуснă немĕç оккупанчĕсене пĕтерсе пыма хăйсен çурнăçне шеллемесĕр çапăçмашăн танкистсем, летчиксем, артиллеристсем, пехотинецсем, пĕтĕм совет боецĕсемпе командирĕсем тупа тăваççĕ. Летчик лейтенант Челпанов çапла каланă:

— Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче пире мĕн тума хушнине эпир тивĕçлĕн пурнăçа кĕртсе пырăпăр. Фашистла çĕлен-калтасене ним шеллемесĕр пĕтерсе пырăпăр.

Летчик сержант Ткачуро çапла каланă: «Эпĕ—çамрăк летчик, анчах та манăн пульăсемпе снарядсенчен тăшман çăлăнса юлаймĕ».

Рота командирĕ старший лейтенант Кузнецов çапла каланă: «Пирĕн территори çине килсе кĕнĕ немĕç захватчикĕсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыма кирли çинчен Сталин юлташ кăтартса панисене эпĕ пурнăçа питĕ те сирĕппĕн кĕртсе пымашкăн тупа тăватăп. Фашистла тискер кайăксене пĕтерсе тăкма пирĕн мĕн кирли пурте пур».

Политрук заместителĕ Князев юлташ çапла каланă: «Пирĕн халăх немĕç захватчикĕсене мĕнке майпа çĕмĕрсе тăкмаллине Сталин юлташ кăтартса панă. Сталин юлташăн выступленийĕ Хĕрлĕ Çаран боецĕсемпе командирĕсене фашистсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр çапăçмашкăн хавхалантарса пырать. Эпĕ немĕç бандичĕсене хирĕç хамăн пурнăçа шеллемесĕр çапăçма пулатăп».

Сталин юлташăн сăмахне итленĕ хыççăн разведчиксем: Ушаков, Шугенин тата Давыденко юлташсем çапла каланă: «Халĕ эпир боевой задание пурнăçламашкăн разведкăна каятпăр. Сталин юлташăн сăмахĕ пирĕн вăйсене тата пире панă боевой задачăна пурнăçа кĕртес ĕçе хамăр шанса тăнине вунă хут ӳстерет. Фашизма çапса салатмашкăн эпир хамăр пурнăçа та шеллесе тăмастпăр». Разведчиксем хăйсем панă сăмаха пурнăçа кĕртнĕ. Вĕсем юханшыв урлă утса каçнă та, немĕçсен окопĕсене кĕрсе кайса, немĕçсен пĕр салтакне ярса тытнă. Çав вăхăтра блиндаж сывăхĕнче немĕç салтакĕсем темĕн васкаса иртсе сӳреме тытăннă. Противникăн блиндажĕ ăшне разведчик Давыденко граната ывăтнă. Çавна пула немĕçсен 10 çынран тăракан ушкăнне пĕтерсе тăкнă.

Полковник Белявцев юлташ çапла каланă: «Сталин юлташăн выступленийĕнче хурçăн логика, уçăмлăх, халăхăн творчествăллă пултарулăхне вĕçĕ-хĕррисĕр ĕненсе тăни çавтери чаплăн куранса тăрать. Çавсене пула вăл хăйĕн ытармi лайăх кăмăлĕн ытамне çавăрса илет. Сталин юлташ отечественнăй аслă вăрçă эпир çĕнтернине вĕçленесси пирки малтанах çирĕппĕн шанса тăрса калани çавтери тĕрĕс. Çак вăрçă фашистла Германие питĕ пысăк катастрофа патне илсе пырать. Сталин юлташăн выступленийĕ хамăран мĕнпур вăя пĕрлештерсе вăйлăн ĕçлесе çĕнтерӳ тумашкăн пире кашнинех çĕнĕ вăй парать, татах та лайăхрах, çине тăрса ĕçлессишĕн чунран тăрăшахан тăвать».

## Çулпуç доклачĕ ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать

ÇĔМĔРЛЕ, ноябрĕн 10-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Октябрьти революци 24 çул тултарни çинчен тунă доклад предприятисенчи рабочисемпе работницăсен ĕçри хастарлăхне çĕклет. Вĕсене татах та пысăк çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

— Аслă Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче пире вăрçăн тăватă уйăхĕ хушшинчи итогсем çинчен тата умра тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа панă. Çулпуç сăмахĕ пире татах та лайăхрах ĕçлеме чĕнет. Эпир мĕнпур вăя, мĕнпур пултарулăха фронта пулăшăнă çĕре парса пыратпăр,—теççĕ комбинатри ремонтно-механически цехри стахановецсем.

Çулпуç сăмахне халĕ кашни рабочи, кашни работница ĕç тухăçлăхне ӳстернипе ответлет. Стахановец Леонид Дубровин октябрь уйăхĕн планне 220 процент пурнăçлана, халĕ вăл нормăна 2,5—3-шер хут ирттерсе тултарать.

Çăван пекех Гришин, Аполлонов, Ярзаев юлташсем те Октябрь уявĕ хыççăн кашни кун икĕ-виçĕ норма тултарса пыраççĕ. Ку цехра ĕçлекенсенчен пĕрремĕшĕсем 40 процента яхăн шутланаççĕ.

«Большевик» заводра стахановкакомсомолка Воробьева юлташ, пĕтĕм коллективăн шухăш-кăмăлне палăртса, çапла каларĕ:

— Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче хальхи обстановкăна яр-уçăн сутатса панă тата çĕнтерӳ пирĕнтех пулмаллине витĕмлĕн ĕнентерчĕ. Аслă çулпуçăн çаплă сăмахĕсемпе хавхаланса, эпир малашне ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ӳстерсе пыма, пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсене пăхăнтарса пыма пулатпăр,—терĕ вăл.

## Сталин юлташ сăмахĕсем пирĕн шанчăка çирĕплетеççĕ

ВĂРМАР, ноябрĕн 10-мĕш. (**Телефонпа**). Районри чылай колхозсенче Сталин юлташăн докладне пĕрле пухăнса итленĕ. Çавăнтах митингсем, пухусем пулса иртнĕ. Шăплат колхозĕнчи 62 çулти П. Максимов колхозник Сталин юлташ докладне итленĕ хыççăн çапла каланă:

— Манăн икĕ ывăл фронтра çапăçать. Вĕсем тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăннине эпĕ çирĕп шанса тăратăп. Вĕсем хăйсен ятне ямĕç, çапăçура чăваш халăхĕн тивлетне ӳкермĕç. Сталин юлташ сăмахĕсем пирĕн чĕрери шанчăка татах та ытларах çирĕплетеççĕ. Эпĕ ватă пулин те хамăн мĕнпур вăя тăван çĕршыв хăватне ӳстерме паратăп. Юлашки сывлăш тухиччен ĕçлеме пăрахмастăп. Çак йывăр та хаяр саманта кашни çын çакăн пек ĕçлемелле.

Çакăн пекех Сталин юлташ докладне Енĕшпул, Хоруй колхозĕсенче коллективлăн итлесе, митингсем туса иртернĕ.

Сталин юлташăн докладĕ районри хăçатра паян пичетленсе тухрĕ. Ана çийĕнчех пур колхозсене те çитеретпĕр. Сталин юлташăн докладĕнче унăн Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă сăмахне ăнлантарса пама районри партипе совет активĕ ялсене тухса каять. Ĕçсыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕç çĕнĕ çĕкленӳпе çарăлса пырать.

**А. СМИРНОВ.**
ВКП(б) Вăрмар райкомĕн секретарĕ.

## Çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшса тăма пулатпăр

ИШЛЕЙ. Сыпайкасси ялсоветне кĕрекен колхозсен членĕсем Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă лаçăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çаран парадĕнче каланă сăмаха тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ лартнă задачăсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма, вĕсем фронтпа çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса тăма пулаççĕ.

Халăхи вăхăтра колхозсенче Сталин юлташăн докладĕнче çăмахне тĕплĕн вĕренеççĕ, ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн, тĕштырăсемпе пахча-çимĕç поставкисене тата ытти обязательствăсене тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Свердлов ячĕпе тăракан колхоз аван çапса пĕтерчĕ. Государствăна тĕштырă, çĕрулми тата пахча-çимĕçсем парса татрĕ. «Клевер» колхозра та ялхуçалăх ĕçĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

—Сталин юлташăн докладĕ пире татах та лайăхрах ĕçлеме хушать. Эпир çĕршыва тата Германи фашизмне хирĕç геройла кĕрешекен Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса пулăшма пулатпăр, — теççĕ колхозниксем.

**С. МАМАЕВ.**

## Производствăллă активлăх ӳсет

СĔНТĔР, ноябрĕн 10-мĕш. (**Телефонпа**). Кăпаскри колхозниксем Сталин юлташ докладне вулав çуртĕнче пухăнса итленĕ. Доклад вĕçленнĕ хыççăн ялсоветĕнчи финагент Орлов юлташ сăмах туртса калать. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Кăпас ялсоветĕ районра чи малта пыракансенчен пĕри пулса тăрать. Октябрь уявĕ тĕлне ялсовет укçа-тенкĕ пухмалли тăваттăмĕш квартал планне 61 процент тултарнă. Орлов юлташ хăйĕн сăмахĕнче укçа-тенкĕ пухас планна срокченех тултарма сăмах панă.

Янăмри «Дружба» леспромартель тата «Быстрый» колхоз членĕсем Сталин юлташ докладне итлесе сӳтсе-явнă хыççăн вăрман хатĕрлес ĕçе хастарлăн тытăнчĕç. Доклад итленĕ хыççăн тепĕр кунтех Янăмран колхозниксемпе «Дружба» артель членĕсем вăрмана 70 лашапа тухса кайрĕç. «Дружба» артель вăрман хатĕрлев планне 80 процент тултарнă, уйрăм заданисем тăрăх плана 100 процентĕнпех пурнăçа кĕртнĕ.

ВКП(б) райкомĕ паян районри агитколлектив руководителĕсен канашлăвне туса ирттерет. Унта Сталин юлташ докладне сӳтсе-явaççĕ. Ыран районри пĕтĕм актив — пропагандистсемпе агитаторсем колхозсене туха каяççĕ. Паян ялсоветсемпе колхоз председателĕсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта Сталин юлташ докладĕнчен тухса тăракан задачăсене сӳтсе-яврĕç.

**Ст. ИВАНОВ.**
ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн пропаганда отделĕн заведующийĕ.

## Çĕнĕ çĕкленӳ

ÇĔРПУ, ноябрĕн 10-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Паян, ĕç пĕтнĕ хыççăн, районри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче ĕççыннисем пĕрлешӳллĕ пухăвĕсемпе митингĕсем пулса иртрĕçĕ. Вĕсенче Сталин юлташăн докладĕнче Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă сăмахне сӳтсе-яваççĕ.

Чиричкассинчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çĕр çынна яхăн пулнă. Унта Сталин юлташăн докладне пулса тухнă хыççăн 4 колхозник сăмах тухса калана. Колхозниксем колхозри ĕçсене татах та хастарлăрах туса пынă, Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах пулăшса пыма сăмах панă.

Çăван пекех ытти çĕрти пухусемпе митингсенче те ĕççыннисем Сталин юлташăн докладне пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яваççĕ, хамăран тыла татах та ытларах çирĕплетме, хамăран çĕнтерӳшĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеме пулаççĕ.

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕ выраннă агитколлективсене пулăшма район центрĕнчен ялсене 38 активиста ячĕ.

**Г. ПЕТРОВ.**

## ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотисене пани

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. Андреева юлташ Канашри вагонсем юсакан заводри товарнăй комбинатăн хĕрлĕ кĕтесĕнче вагонсем юсакан заводри тата Канаш чугунçул станцинчи вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине панă.

Хисеплĕ грамотăсемпе наградăланисем хушшинче вагонсем юсакан заводри чи лайăх çынсем-стахановецсем — тимĕрçĕ С. Дементьев, токарьсем — П. Калашникова, Л. Мазеньков, Я. Тимофеев, слесарнăй бригадăн бригадирĕ А. Орешников, платформăсен строительствин слесарнăй ĕçсен бригадирĕ П. Храмов, çавнашкалах Канаш станцинчи рабочисем—5-мĕш дистанци мастерскойĕнчи слесарь И. Андрианов, сигнализацине сыхăнуç 4-мĕш дистанцири электротехникĕ В. Семенов юлташсем.

Наградăланисем хисеплĕ грамотăсене илнĕ хыççăн пысăк наградăна тӳрре кăларма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци туса кăларассине вăйлатма пулса сăмах каларĕç. Вагонсем юсакан цех начальникĕ Коломеец, вагонсем тăвакан цех начальникĕ Струхин тата завод директорĕ Поздняков юлташсем рабочисен ячĕпе сăмах тухса каларĕç.

Хисеплĕ грамотăсене парса пĕтернĕ хыççăн З. Андреева юлташ пысăк награда илнисене сывлăх сунса саламларĕ, вагонсем юсакан заводри тата Канаш станцинчи рабочисен коллективне тылра татах та лайăхрах ĕçлесе, нормăсене ытлашшипех тултарма тата «пирĕн çĕршыва чуралăха чикес шутпа çĕмĕрленсе кĕнĕ немĕç оккупанчĕсене пурне те пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкма» мĕн кирлине пурне те туса пыма чĕнчĕ.

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## Ноябрĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç мĕнпур фронтсенче çапăçусем туса пынă.

* * *

Ленинград фронтĕнче çапăçакан пирĕн авиачăссем ноябрĕн 6-мĕшпе 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ икĕ кун хушшинчи çапăçусенче фашистсенне 50 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Данилов лейтенант командир пулса ертсе пыракан пирĕн икĕ танк Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противник йышăнса тăракан вырăна шала çĕмĕрсе кĕнĕ те немĕç салтакĕсен ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕн немĕçсем тытса илнĕ районĕсенче кĕрешекен партизансем юлашки икĕ уйăх хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăнне боеприпассем тиенĕ 39 автомашинăна, 2 танк, 2 самолет, 17 бронемашина, 9 мотоцикл, 11 кĕпер, продовольстви базине пĕтерсе тăкнă, противникăн 517 салтакне тата 20 офицерне вĕлернĕ. Партизансен К. районĕнчи отрячĕсем тăшмана хирĕç уйрăмах ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Т. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ пĕр кĕпере взрыв туса аркатнă, çапла вара немĕç колоннисем куçса килнине чарса лартнă. Çав отрядах немĕç самолечĕ сине пăшалсенчен пенĕ те, самолет сиенленнипе çĕр сине анса ларнă, партизансем ăна командипе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Партизансен отрядне пĕтерсе тăкма немĕçсем белофинсен 200 çынтан тăракан пысăк ушкăнне мотоциклетсемпе тата велосипедсемпе янă. Çĕрле партизансем вăрманта засада тунă та белофинсем сывхарса пынă чухне пăшалсенчен пеме тытăннă, белофинсен 8 салтакне вĕлернĕ тата темиçе салтака амантнă. Ыттисем тарнă. Çав каçхинех партизансен çак отрячĕн тепĕр виçĕ группи темиçе кĕпере ишĕлтернĕ тата юханшыври парома пĕтерсе тăкнă. Çакна пула противникăн колоннисем куçса килесси чылай вăхăтлăха чарăнса ларнă.

Д. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен тепĕр отрячĕ немĕç штабĕн машини сине пырса тапăннă. Партизансем гранатăсемпе тата броньăна çĕмĕрекен пульăсемпе персе машинăна тата 5 немĕçе пĕтерсе тăкнă. Çак отрядри партизансен группи К. районĕнче граната сыххисем пăрахса немĕçсен икĕ бронемашинине стройран кăларнă, кунпа пĕрлех 4 немĕçе вĕлернĕ.

Нумаях пулмасть, Орел хулинче, «Коммуналь» ресторанра немĕç гарнизонĕн командованийĕ офицерсем валли вечер тунă. Партизансем хулана пырса кĕнĕ те, ресторан çурчĕ çине гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтарса ывăтнă. Взрыв тата пушар пулнипе фашистла офицерсем 150 çынна яхăн пĕтнĕ.

* * *

Немĕç салтакĕсем çумĕнче тупнă çырусем Германи çарĕн тылĕнчи пурнăçпа шухăш-кăмăлсене кăтартса параççĕ. Германири хуласемпе ялсенчен килекен çырусенче немĕç халăхĕ шикленни тата пысăк хуйăха ӳкни палăрать. Иосиф К. салтак патне Мюльдорфран арăмĕ çапла çырать: «Пирĕннисем ĕнтĕ Хĕвелтухăçĕнче нумайĕшĕсем пĕтрĕç! Малашне мĕнтери çухатусем пулĕç. Хĕллене унтах юлсан эсир пурте пĕтетĕр». Генрих Бойер патне ватă амăшĕ шикленӳллĕн çапла çырать: «Эсир ĕнтĕ Российăна питĕ шала кĕрсе кайрăр, сирĕн унтан каялла тухма май килĕ-ши?». Немĕç салтакĕ Михаэль Штамм нумаях пулмасть амăшĕнчен çыру илнĕ, унта амăшĕ вăрçă пурне те йĕрĕнтерсе çитерчĕ тесе çырать. Амăшĕ хăйĕн ывăлне, пурнăçне сыхласа хăвартăр тесе, адрес уламăртарма канаш парать. Штамм çав сăмахсене амăшĕ тыткăна лекме канаш панă пек ăнланнă та, çав канаша пурнăçа кĕртнĕ. Г. Шиманек салтака хăйĕн ашшĕ çапла пĕлтерет: «Хенкель ывăлĕ пĕтнĕ, тата çавăн пекех Марта Бретшнейдерăн упăшки те пĕтнĕ. Çакă вăл питех те пысăк хуйхă: вĕçĕ ăçта? Хăçан пĕтет çак вăрçă?» Ганс Б. арăмĕ Эллингран çапла ӳкелешсе çырать: «...Хулара продовольстви тĕлĕппе ĕç питĕ начар. Карточкăсем тăрăх нимĕн те памаççĕ». Виктор Пачковский патне çавăн çинченех çырасçĕ: «...Нимĕн те тупса илме çук. Нимĕн те, нимĕн те çук...» Вернер Кредер унтер-офицера çапла пĕлтерессĕ: «Дрезденра выçлăх. Пурте вăрçă часрах пĕтессине кĕтеççĕ. Çакăн çинчен сирĕн патра мĕн калаçассĕ, çырса пĕлтер. Пирĕн асапсемпе хĕнхурсем хăçан пĕтĕç?».

# Тăван çĕршыв оборонин фондне

ВАРМАР. **(Хамăр корр.).** Районри ĕçсыннисем оборона фондне укçасем, заем облигацийĕсем пĕр чарăнмасăр хывса тăраççĕ. Спортинвентарь фабрикинче ĕçлекенсем оборона фондне 12.295 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. Вăл шутран Д. Тушинский юлташ 1225 тенкĕлĕх, В. Ларионова юлташ 570 тенкĕлĕх, О. Чемышева юлташ 535 тенкĕлĕх панă. Чылай рабочисемпе работницăсем хăйсен пĕр кунхи ĕç укçине вăрçă пĕтичченех оборона фондне парса тăма пулнă.

Çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе çар ĕçне вĕренекенсем те активлăн хутшăнаççĕ. Пинер участокĕнче вĕренекенсем юлашки вăхăтра оборона фондне государство заемĕсен облигацийĕсене 1435 тенкĕлĕх хывнă. Унсăр пуçне вĕсем çахал мар ăшă тумтирсем пухса панă.

Пинер участокĕнчи боецсен пуçарăвĕ Кĕлкеш участокĕнчи боецсем хушшинче те сарăлнă. Вĕсем оборона фончĕ валли 1700 тенкĕлĕх облигаци, 260 тенкĕ укçан пухнă. Пухнă укçипе матери илсе, минтер пичĕсем çĕленĕ. Примерлă боецсенчен Г. Миронов юлташ 450 тенкĕлĕх, В. Семенов 250 тенкĕлĕх, П. Ванюков 200 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă.

**Т. ИВАНОВ.**

* * *

Канашри педучилище коллективĕ Хĕрлĕ Çара пулăшас, тыла çирĕплетес ĕçе активлăн хутшăнать. Тырпулсене уйран пухса кĕме çывăхри колхозсене пысăк пулăшу пачĕ. Уйпуçĕнчи «Çĕнĕ çул» колхозра преподавательсемпе служащисем 6.2 гектар тырă вырса, çĕмĕлсем туса 96,5 ĕçкунĕ тунă. Туриках Уçырмари «Ударник» колхоза 45,99 гектар, Вăтапуçĕнчи «Идея Ленина» колхоза 55,04 гектар, Çĕнĕ Ахпӳртри «Красный путиловец» колхоза 55,65 гектар тырă вырса панă. Мăкăр Çырми колхозĕнче пĕр гектар çĕрулми кăларса панă. Çапла вара преподавательсемпе вĕренекенсем «Ударник» колхозра 380,67 ĕçкунĕ, «Идея Ленина» колхозра 850 ĕçкунĕ, «Красный путиловец» колхозра 992 ĕçкунĕ тунă. Асăннă колхозсенче ĕçлесе пĕтĕмпе 163,88 гектар тырă вырса пуçтарса, çĕрулми кăларса, комбайн патĕнче ĕçлесе, 2349 ĕçкунĕ тунă. Çав ĕçкунĕсем тăрăх тивекен тупăша педучилище коллективĕ оборона фондне парать.

**Е. РОМАНОВА.**

# Совет Союзĕн Тегеранри посольствинче пулнă йышăну

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче ССР Союзĕн Тегеранри посольстви Октябрьти Социализмла Асла Революци 24 çул тултарнă ятпа пысăк йышăну туса ирттернĕ, унта Иран правительствин, Иран çарĕн тата культурăллă организацисен тăвай представителĕсем, дипломатиллĕ корпус, Иран форугĕсем, меджлис председателĕ Эссеэдинари, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сохейли, çар министрĕ Нахидживан тата ыттисем те пулнă.

# Стюарт совет авиацийĕн ĕçĕсем çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Лондонри радио тăрăх авиацине лайăх пĕлекен, Англин «Аэроноутикс» журналăн редакторĕ Оливер Стюарт сăмах тухса калана. Вăл Хĕвелтухăç фронтĕнчи вăрçă ĕçĕсене обзор туса, совет авиацийĕн боевой ĕçĕсене тĕплĕ характеристика панă. Стюарт çапла пĕлтернĕ: «Совет авиацийĕ стратегипе тактика енчен пĕтĕм тĕнче авиацине, çав шутрах Германи авиацине те, сахал мар уроксем пачĕ. Эпĕ çапла шутлатăп: хальхи вăрçăн историне çырнă чухне совет авиацийĕн ролĕ питех те пысăк пулĕ тата авиаци историйĕнче образец пулса тăрĕ. Нимĕнле йывăрлăх та совет авиацине пĕр сехетлĕхе те чарма пултарайман. Вăрçăн йывăр условийĕсем тата лайăх майлаштарса тунă аэродромсем пулманни ăна пĕрре те чарса лартман. Эпĕ совет авиацийĕ танксемпе кĕрешмелли пачах çĕнĕ çулсем тупни çинчен палăртнăччĕ, кунта вĕсенчен вĕренмелли тата мĕн вĕренмелли нумай. Совет авиацийĕн специальноçĕсенчен пĕри вăл—противникăн танкĕсемпе войскисене çĕр çумĕн аялтан вĕçсе атакăлани пулса тăрать. Çав атакăсене, çанталăк начар, пĕлтĕрлĕ вăхăтра, ытти операцисене тума май килмен чухне ирттереççĕ. Çанталăк начар пирки çӳлте вĕçме май килмен условисенче совет самолечĕсем пĕрре çеç мар противникăн войскисем, транспорчĕсем тата танкĕсем сине çĕр çумĕн аялтан вĕçсе тапăннă. Çапла вара, çанталăка кура вăрçă ĕçĕсене тума май килмен пек туйăннă чухне те, вĕсем противника çухатусем тӳстерме пултарнă».

# Хэлл заявленийĕ пирки Финляндире мĕн калаçаççĕ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Хэлл Финляндия хăйпе США хушшинчи туслăха сыхласа усрас тет пулсан, унăн ССР Союзне хирĕçле вăрçă ĕçĕсене халех пĕтермелле, тесе пĕлтерни финн халăхĕн мĕнпур сийне пысăккăн хумхантарнă. Вăл Финляндири общественăллă тата политикăллă мĕнпур деятельсен позицине çирĕплетнĕ. Вĕсем малтан Финляндине хăйсен интересне тата Германи империализмĕн интересне пула вăрçă нушалăхне кĕртсе янă ертсе пыракан ушкăнсен политики пирки шикленсе ӳкнĕ пулнă. Англири «Дейли экспресс» хаçатăн Финлянди чиккинче тăракан специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: çĕршывра пĕр лагерь пулса тăракан Германи майлă элементсемпе Финляндине никама пăхăнса тăмалла мар тăвассишĕн тата вăрçă ĕçĕсене пĕтересси майлă тăракансем хушшинче вăйлă кĕрешӳ пырать. Ноябрĕн 3-мĕшĕнче Хельсинкире миршĕн тăракансен вăйлă демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Демонстрантсен вăрăм колоннисем ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви патне кайнă. Полици 21 çынна арестленĕ.

# Электроэнергине расходлассине чакарма приказ панă

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çар власĕсем ноябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа кăнтăр-хĕвелтухăçри çичĕ штатсенче электроэнергин расходне чакарасси çинчен тата электроэнергине ытлашши кирлех мар çĕрте, сăмахран, электрореклама тата ытти валли те, усă курма чарасси çинчен приказ панă.

Çар предприятийĕсене чарăнмасăр ĕçлеме май туса парас тĕлĕппе 13 штатра государствăн тата частнăй электрокомпанисене вăраха хăвармасăр пĕрлештерме палăртнă. 7 штатра промышленноçлă тата коммерчески хăшпĕр пысăк потребительсене электроэнергие 30 процент, ытти вырăнсенче 5 процент чакарма хушнă.

# Германия Словаки умне кăларса тăратнă çĕнĕ требованисем

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Чехословакин пичет бюровĕ, Словаки президенчĕ Тисо нумаях пулмасть Гитлерăн верховнăй ставкинче пулни çинчен каласа парса, çапла пĕлтерет: Тисо Гитлер патĕче пулнă чухне ун умне çĕнĕ требованисем кăларса тăратнă, çав требованисене пурнăçа кĕртни Словаки çĕршывне Германипе Венгри хушшинче пайласа уйăрнине пĕрех пулать. Паллă ĕнтĕ, Словакия тĕрĕссипе нимĕçсен протекторачĕ пулса тăрать тата ăна пĕтĕмĕшпех Германие пăхăнтарнă. Анчах Тисо сăмахĕсем тăрăх, вăл Словаки çĕршывне хăй тĕллĕн никама пăхăнмасăр пурăннă пек те пулин сыхласа хăварма пултарнă имĕш. Çапах та Словаки çĕршывĕнче политикăллă реорганизаци туса ирттерессипе Тисо килĕшнĕ, çав реорганизацине нимĕçсем ертсе пынипе туса ирттермелле иккен. Политикăллă реорганизаци туни Словаки çĕршывне нимĕçсем пуçĕпех оккупацилессине, ăна Германи провинцийĕ туса хурассине пĕлтерет.

# Норвегине пулăшас тĕлĕппе ĕçлекен комитет

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Стокгольмра Фредрик Стрем председатель пулса ĕçленипе Норвегине пулăшакан комитет организациленĕ. Комитет «Социал-демократен» хаçатра çакăн пек воззвани пичетлесе кăларнă: «Сӳрçĕрти çĕршывсен ирĕкĕ Швецин пурнăçне татса паракан ĕç пулса тăрать. Çак кун пирĕн шухăш штыксемпе хĕсĕрлекен режима пăхăнманшăн йывăр испытанисем тӳсекен тăван Норвеги халăхĕпе пĕр кăмăллă. Уйрăм граждансемпе организацисем Норвеги ирĕкĕшĕн пурне те пама хатĕр. Эпир вĕсен тĕрĕс те кăватлă кĕрешĕвĕпе савăнатпăр. Норвегине пулăшакан комитет Норвегири беженецсемпе Норвегин нуша тӳсекен халăхне май пур таран пулăшма чĕнет».

# Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Киренаикăпа Триполитанири тĕрлĕрен çар объекчĕсем сине пырса тапăннă. Дернăпа унăн таврашĕнчи вырăнсенче транспорт автоколоннисемпе мастерскойсем сине бомбăсем пăрахнă. Пайтах çуртсене вут тивсе илнĕ. Пĕр вырăнта кĕпĕрленсе тăракан танксемпе ытти машинăсем сине те çакнашкалах тапăннă. Бомбардировщиксем противникăн Мартули тата Лэдензри аэродромĕсем сине те вĕçсе пынă. Кунта вĕсем, çĕр çумĕпе вĕçсе пырса, çак аэродромсенче вырнаçса ларнă «Ю-88» самолетсене пулеметсенчен пенĕ, нумай самолетсене юрăхсăра кăларнă. Триполире горючисем склачĕ сине бомбăсем пăрахнă. Кунсăр пуçне темиçе автомашинăна вут тивертсе хыптарса янă.

Ноябрĕн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Бенгази сине бомбăсем пăрахнă вăхăтра портри сооруженисемпе прожекторсен позицине бомбăсем тĕл пыра-пыра ӳкнине сăнанă.

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Маллахтри аэродром патĕнчи çуртсемпе складсем сине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем ӳкнипе горючисем склачĕ çунма пуçланă. Противника пулеметсенчен пенĕ.

Çав кунах Кăнтăр Африка Союзĕн сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем Бардири портсемпе ытти объектсем сине çĕнĕрен бомбăсем пырса пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнă вăхăтра Англи самолечĕсем противникăн истребителĕсемпе тĕлпулса «Мессершмитт-109» маркăллă пĕр самолета пĕрсе антарнă.

Ноябрĕн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Киренаика сине татах тепĕр хут пырса тапăннă. Ку хутра вĕсем Бардире тата Мартрухра бомбăсем пăрахнă. Çанталăк япăх пулнă пирки бомбăсем ăçта ӳкнине сăнама май пулман.

Ноябрĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Неаполь сине çĕнĕрен пырса тапăннă. Ку хутра бомбăсем чугунçул станцийĕпе портра çурăласа çурăла кайнă. Авиаци завочĕн районĕнче пушар тухнă. Сицили утравĕнче подводнăй лодкăсен бази сине тата Капо ди Чинори аэродром сине сывлăшран пырса тапăннă. Çар çурчĕсенчен пайтахăлăвсене вут тивертсе янă. Çак операцисенчен Англин икĕ самолечĕ хăйсен базине таврăнман.

# Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Берлин, Кельн тата Мангейм хулисем сине кайса тапăннă. Çанталăк условийĕсем чăрмантарнă пулсан та, йышлă бомбардировщиксем хăйсен бомбăсен грузне Берлин районĕ сине пăрахма пултарнă. Кельн хули сине бомбăсене ăнăçлăн пăрахнă. Çавăн пекех Германин чылай хулисем сине, Булоньри, Остендери доксем сине те бомбăсем пăрахнă. Çав операцисенчен 35 самолет хăйсен базисене таврăнман. Вĕсенчен чылайăшĕ Берлин, Кельн тата Рур тĕлĕнче шăпа ларнипе пĕтнĕ, пĕр пĕчĕк пайне кăна сывлăшпи çапăçура персе антарнă.

Ноябрĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ каллех Рурти промышленность объекчĕсем сине бомбăсем пăрахнă. Тăшман самолечĕсем Англин кăнтăр çыранĕнчи халăх пурăнакан икĕ пункт сине бомбăсем пăрахнă. Жертвăсем пур, материалла сиен пысăк мар.

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Берлинри тата Рейн облаçĕнчи тĕрлĕрен объектсем сине кайса тапăннă.

# Англичансем финсен пароходне тытса илни

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тинĕс çинче ĕçлекенсем хушшинче англичансем финсен «Лихна» ятлă суду-илӳ суднине тытса чарни çинчен пĕлтерессĕ. Çав суднăн тоннажĕ 3300 регистровăй брутто-тонна шутланать. Çакă англичансем финсенчен тытса илнĕ пиллĕкмĕш пароход.

# Чехословакири террор

СТАМБУЛ, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Урса кайнă террор Чехире çаплах чарăнмасть. «Дер нейе таг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ виçĕ кун хушшинче Прагăра экономикăллă саботаж тунă тесе чехсене 24 çынна вĕлерме приговор йышăннă.

# Протекторатри арестсемпе вĕлерӳсем

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра чехсен протекторатĕнче немĕçсем 1095 çынна арестленĕ тата 307 çынна вĕлернĕ.

# ХРОНИКА

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ М. М. Литвинов юлташа ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ пулма уйăрса лартнă.

СССР Верховный Совет Президиумĕ К. А. Уманский юлташа, ăна Наркоминделри урăх ответлă ĕçе уйăрса лартнă пирки, ССР Союзĕн США-ри чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕн обязанноçĕсенчен хăтарнă.

## НИМĔÇ САМОЛЕЧĔСЕМ МУСКАВ СИНЕ ВĔÇСЕ ПЫНИ

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче немĕç самолечĕсен темиçе группи Мускав сине вĕçсе пыма хăтланнă. Хула районне кĕрсе кайнă темиçе самолет пурăнмалли çуртсем сине фугаснăй бомбăсем пăрахнă. Жертвăсем пур.

# Красноармеецсен семьисене пулăшаççĕ

КАНАШ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Районри партипе совет организацийĕсем Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе боецсен семьисене пысăк пулăшу параççĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланăранпа райсобес урлă темиçе пин тенкĕ пособи укçи панă. Иртнĕ уйăхри пособи укçи темиçе пин тенкĕ пулнă.

Унсăр пуçне предприятисемпе учрежденисем, ялсовечĕсемпе колхозсем красноармеецсен семьисене вутă илсе парса, хваттер тупса парса пулăшаççĕ. Аш-какай комбиначĕн дирекцийĕ 13 семьене, вăрман промыслин дирекцийĕ 8 семьене вутă хатĕрлесе панă, темиçе семьене вăхăтлăх пособи парса пулăшнă. Сăмахран, красноармеец Павлов арăмĕ аш-какай комбинатĕнчен 200 тенкĕ укçа илнĕ.

Тăван çĕршыва сыхлакансене пулăшас тĕлĕппе межрайбаза (директорĕ Улитин юлташ) лайăх ĕç тунă. Вăл хăйĕн базинчен фронта каякан рабочисемпе служащисене хĕл тумтирĕсем парса янă. Çара кайиччен Н. Куприянов юлташ бухгалтерта, Н. Мюресов юлташ шофер пулса ĕçленĕ. Çара кайнă чух вĕсене межрайбаза дирекцийĕ ваткăран çĕлетнĕ брюкипе тата фуфайкăпа тумлантарса янă. Семьисене укçасăр хваттер панă. Çавăн пекех В. Иванова А. Федоров юлташсене те фронта ăшă тумлантарса ăсатнă.

Красноармеец арăмĕсене панă тепĕр пулăшу вăл—вĕсене ĕçе хăвăрт вырнаçтарни, ĕçлеме, пурăнма кирлĕ условисем туса пани. Кайăк-кĕшĕк комбинатĕнче икĕ красноармеец арăмне, ялхуçалăх снабженинче виçĕ красноармеец арăмне ĕçе вырнаçтарнă, хваттер тупса, вутă хатĕрлесе панă.

* * *

ВĂРМАР. **(Хамăр корр.).** Октябрь уйăхĕнче райсобес тăван çĕршыва сыхлакансен семьисене темиçе пин тенкĕлĕх пособи панă.

Унсăр пуçне чылай колхозсем красноармеецсен ватăлса ĕçлейми пулнă ашшĕ-амăшĕсене, çитĕнсе çитсе ĕçлекенсен шутне кĕреймен ачи-пăчисене укçа-тенкĕ, тырпул уйăрса парса пулăшаççĕ. Кивĕ Вăрмарти «Большевик» колхоз правленийĕ красноармеецсен хуçалăхĕсене 485 тенкĕлĕх пособи, Кĕтеснерти «Партин 15 съезчĕ» колхоз правленийĕ тырпул, укçа парса пулăшнă. Кун пек паха тĕслĕхсем районра сахал мар.

# Йĕкехӳресене тĕп тăвар

Йĕкехӳресем пысăк сиен кӳни пуриншĕн те паллă. Çавăнпа та вĕсене пĕтерессишĕн тимлĕн ĕçлемелле. Йĕкехӳресене химиллĕ, механикăллă тата профилактикăллă майсемпе пĕтерме пулать.

Химиллĕ майсемпе пĕтернĕ чухне приманкăсене углекислăй барипе усă курса тăваççĕ. Пĕр пай яд илсе, сакăр пай продукт (хура çăкăр, пĕçернĕ çĕрулми, ыран çăнăхĕ, пахча-çимĕçсем т. ыт. те) хутшăнтараççĕ те, йĕкехӳресем çӳрекен вырăнсене хураççĕ.

Приманкăсене хатĕрленĕ чухне вĕсене алă вĕççĕн тыткалама кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен йĕкехӳресем приманкăсене алă вĕççĕн тыткаланине час туйса илеççĕ. Çавăнпа приманкăсене резина е сăран алсасем тăхăнса хатĕрлемелле.

Тырпулсен склачĕсенче, вылăхсен витисенче приманкăсене ятарласа тунă ещĕксене хураççĕ. Çав ещĕксен айкисенче йĕкехӳресем кĕрсе тухмалăх шăтăксем пулма кирлĕ.

Механикăллă майсемпе пĕтернĕ чухне йĕкехӳресене тĕрлĕрен капкăнсемпе тата ловушкăсемпе тытаççĕ. Вĕсене кашни хуçалăхрах тума пулать.

Профилактилăллă майсемпе пĕтернĕ чухне йĕкехӳресене çуртйĕрсене кĕмелле мар тăваççĕ. Йĕкехӳресене пĕтернĕ чухне асăннă пур майсемпе те пĕр тăруках усă курни паха результатсем парать.

Кашни колхозрах йĕкехӳресене йăлтах пĕтерессишĕн тăрăшмалла.

**Агроном Т. НИКИТИН.**

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7132. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557. Ф. б. 53 84 п. л.